С С(Чув)
К 56
Ч-36492

Л.А. КОВАЛЮК

# Шурă акăш



Национальная библиотека ЧР
4-036492

КФ К С(Чув) К56

Л. А. КОВАЛЮК

# Шурă акăш

Шупашкар-99

УДК 894.344
ББК 84 (2 Рос=Чув)—5
К 56

Обязат. экз.

*Лидия КОВАЛЮК ячĕ чăваш поэзине юратса вулакансемшĕн паллă ят. Вăл халиччен виçĕ кĕнеке кăларнăччĕ. Малтанхи тапхăрта ытларах ачасем валли çыратчĕ. Юлашки çулсенче аслăрах çулсенчисене те “аса илчĕ” курăнать. Унăн хальхи сăввисенче хĕрарăмла ачашлăх, çепĕçлĕх, ырă кăмăллăх тыткăна илет. Мĕн çывăхлатать-ши çынсене? Мĕнле туйăм? Паллах, юрату. Юрату кăткăслăхне, тепĕр чух унăн ăнлантарса та пама çук ыйтăвĕсене Лидия Ковалюк хăйĕн пултарулăхĕпе уçса пама пултарать е тĕрĕс çул çине кĕртсе ярать.*

*Лидия Ковалюкăн малашлăхĕ пысăк, çитĕнӳллĕ. Эпир, унăн пултарулăхне юратакансем, пĕр сăмах çеç калама пултаратпăр: ăнăçу!*

*Ăнăçу сана, Лидия!..*

Ч-36492

*Юрий АЙДАШ, Чăваш Республикин К. В. Иванов ячĕллĕ Государство премийĕн лауреачĕ, поэт.*

ПРОВЕРЕНО 2010
28 СЕН 2017
Национальная библиотека Чув. Республики



Лидия Алексеевна КОВАЛЮК-АНТИПОВА Патăрьел районĕнчи Алманчă ялĕнче çуралнă. Вăтам шкулта вĕреннĕ. Чăваш Патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕнчен вĕренсе тухнă. Ачасене чăваш чĕлхипе литератури вĕрентнĕ, комсомолта ĕçленĕ, çамрăксен общежитийĕнче воспитатель пулнă. Хальхи вăхăтра Республикăри кĕнеке юратакансен обществине ертсе пырать. Лидия Алексеевна Ковалюк — Раççей Журналисчĕсен Союзĕн членĕ.

Унăн чи пирвайхи сăввисем стена хаçатĕнче пичетленнĕ, каярахпа "Авангард" хаçатра кун çути курнă.

Лидия Ковалюк "Ырă кун", "Тавах ачам", "Çурхи вăй" кĕнекесен авторĕ. Унăн калавĕсем шкул программине те кĕнĕ.

Поэтессăн произведенийĕсем "Тăван Атăл", "Ялав", республикăра тухса тăракан журналсенче, хаçатсенче часчасах пичетленсе тухаççĕ.

# ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Ман Тăван çĕршывăм — тулăх хирсенче —
текенсем чăтма çук кăмăла хуçаççĕ.
Ман Тăван çĕршывăм — хамăр хирсенче:
Чухăн-и? Пуян-и? Пулмĕ вăл хуçасăр.

Хам йăхсем вăй илнĕ çĕршыва мансан,
эп кама-ши кирлĕ? Калама пĕлместĕп.
Эс, Тăван çĕршывăм, тухмăн ман асран:
сан пекки тек пур-ши? Пĕртте ĕненместĕп.

# ЧӐВАШ ҪӖРШЫВӖ

Чӑваш ҫӗршывӗ — пирӗн кил,
Вӑл маншӑн ӗмӗрех тӑван.
Тӑван ҫӗршыв пилленӗ пил
пире упранӑ ачаран.

Пире ҫуратнӑ ҫӗр аннен
ыр кӑмӑлне пула ялан
Эпир те ӑшӑ ҫуркуннен
Сар хӗвелне манса кайман.

Сар хӗвеле юратнӑран
Эпир ӳсетпӗр савӑнса.
Кӑвак тӳпемӗр хуралсан,
Эпир ҫӳретпӗр хурланса.

Кашни кил-йыш хӗвел сӑнне
упрас пулсан ҫак тӗнчере,
Ҫын курмӗ вӑрҫӑ пушарне,
телейлӗн тапӗ ик чӗре...

# АЛМАНЧӐ ГИМНӖ

1. Юратнӑ аслӑ ял Алманчӑ
Пуриншӗн ырлӑх эс пурри.
Эс пирӗн савнӑҫ, пирӗн шанчӑк,
Хевте ҫӑлкуҫӗ, чун юрри.

Хушса юрламалли:
Эс пуррипе эпир телейлӗ,
Эс пуррипе эпир илемлӗ.
Ҫулсем васкаччӑр — ӗмӗрех
Алманчӑ пирӗн чӗрере.

2. Эпир пӗрне-пӗри халь ҫывӑх
Савса чӗнетпӗр: "Тус... Тӑван".
Тӑван Алманчӑ, пул эс сывӑ,
Хӑватланса эс пыр ялан.

Хушса юрламалли:
Эс пуррипе эпир телейлӗ,
Эс пуррипе эпир илемлӗ.
Ҫулсем васкаччӑр — ӗмӗрех
Алманчӑ пирӗн чӗрере.

3. Яту-чапу инҫе сан кайтӑр,
Янратӑр юрӑ-кӗвӗре
Маттур пулма сӑмах паратпӑр
Эпир куллен мӗнпур ӗҫре.

Хушса юрламалли:
Эс пуррипе эпир телейлӗ,
Эс пуррипе эпир илемлӗ.
Ҫулсем васкаччӑр — ӗмӗрех
Алманчӑ пирӗн чӗрере.

# МАНСА КАЙМАН САНА, АЛМАНЧӐ!

Эп ҫуралнӑ ял Алманчӑ
Сӑрт ҫине вырнаҫнӑскер,
Те мана пачах та манчӗ?
Тӗрӗсне пӗлместӗп-ҫке!

Сулхӑнне чӗнет ир-каҫӑн
Ял тулли лаштра йӑмра.
Ман ҫинчен те шухӑшлаҫҫӗ
Йывӑҫсем ҫак вӑхӑтра.

Шӑнкӑртамӑн* янӑравлӑ
Юхӑмне итле-итле
иртнӗ вӑхӑтӑн пит шавлӑ
Пурнӑҫне курас килет.

Ҫакӑнта вылянӑ-ӳснӗ
Пирӗн ӳсӗм — ҫӗн малаш.
Хурлӑхне те курнӑ, тӳснӗ
Килӗшӳллӗ тус-юлташ.

Эп ҫуралнӑ ял Алманчӑ —
Сӑрт ҫинчи илемлӗ ял,—
Тавтапуҫ! Эс патӑн шанчӑк,
Патӑн тӳсӗмлӗ вӑй-хал.

Тӗмӗн чул маттур хӗр-каччӑ
Ӑс пухсассӑн шкулунта
Ҫӗнӗ ҫул умра шыратчӗ,
Парӑм пур сан умӑнта.

Тен, йӗплет пуль ял кахалӗ
Ман ҫинчен аса илсе:
"Вӑл хула майри-ҫке халӗ?
Мӗн тӑвать кунта килсе?"

Сӳтӗк ӑс вӑл ӗмӗрне те
Тӗк тӑраймӗ, тупата!
...Тунсӑх ҫулӗпе вӗҫтертӗм
Эп, Алманчӑ сан пата!

**Шӑнкӑртам* — ҫырма ячӗ.*

* * *

Эп пырса кĕретĕп Алманча
кун çути хаваслăн сарăлсан.
Урамра чупать ача-пăча,
е тарать вăл вăтанса манран.

Те мана "вĕрентекен" тесе
ютшăнаççĕ пуль мана курсан.
Вĕсене чунтан хĕпĕртесе
ăшшăн ачашлассăм килчĕ ман.

Аякра куккукĕ авăтать,
курăнать чиркӳ тăрри малта.
Чан сасси асамлăн янăрать,
карчăк-кĕрчĕк ун патне утать.

Улăхри кĕтӳç шăхличĕ те
Кăмăла уçса ярать кĕçех.
Тăван ял çунатлă ĕмĕте
çĕклесе хир инçетне вĕçет.

Çавасем туптаççĕ улăхра,
Çут тĕнче мана куçран пăхать.
Чĕрери асамлă шăплăхра
Эп тăнлатăп хамăн халăха.

# ПАТĂРЬЕЛĔМ.

Эс илемлĕ, Патăрьелĕм,
Эсĕ пирĕншĕн — çăтмах.
Ман чĕрем, çуралнă енĕм,
Тек тапать пĕр саншăнах.

Юхан шыв, уй-хир, пур вырăн,
Айлăмсем, тӳремлĕхсем —
Пĕтĕмпех хитре те ырă,
Çĕкленессĕ ĕмĕтсем.

Тăсăлать ав Пăла шывĕ,
Вăл пĕрре çак тĕнчере.
Ун çинчен халь юрă хыв эс —
Вутланса тăрать чĕрем.

Ман тăван чăваш чĕлхийĕ
Илтĕнсе тăрать кунта.
Мĕнешкел чăваш юррийĕ!—
Кашниех-çке янратать.

Çиçнĕ чух çӳлте хĕвелĕ,
Çутă пулнă чух куçра
Эп тăван ене хисеплĕп,
Халăхăм ялан асра.

*Апрель 1998 г.*

* * *

Эй, чăваш çынни! Часрах, часрах вăран.
Çывăрса выртассăн пусмăртах пулан.
Мĕншĕн сас памастăн, мĕншĕн тĕлĕрен,
Тен, чĕмсĕрленсе эс вăй пухан куллен?

Ĕлĕкрен эс пулнă пит хастар, ĕçчен
Халĕ те, маттур эс, аптраман тавраш!
Паттăр чунлă халăх! Вăрансам, çĕклен!
Хăвăн вăй-хална халь кăтартсам, чăваш.

# ЧӐВАШ ХАЛӐХНЕ.

Эй, тӑван халӑхӑм,
Санпа ман шухӑшӑм,
Санпа ман кӑмӑлӑм,
Эс сывлӑхлӑ пулсан,
Эп те сывах ялан.
Упра эс чӗлхӳне,
Ан пӗттӗр ӗмӗрне.
Шанатӑп эп ҫакна,
Калатӑп чунтанах,
Эп санӑн инкекне
Илетӗп хам ҫине.
Эс тунӑ ҫитӗнӳ —
Вӑл маншӑн хӗпӗртӳ.
Сана чыс та мухтав,
Манран пит пысӑк тав!

*Апрель 1998 г.*

* * *

Вĕçеççĕ манăн шухăшсем
Тăван яла, тăван çĕре.
Тăван çĕршывăн уй-хирне,
Тăван çĕршывăн вăрманне.

Пырса кĕретĕп Алманча,
Кĕтсе илет ял-йыш мана.
Тус-тăвансем, тантăшăмсем
Чун пек кĕтеç мана кунта.

Чун-чĕререн ăш кăмăлпа
Кураç вĕсем паян мана.
Куратăп эп чăваш çĕрне,
Туятăп эп чăваш яшне.

Чăваш юрри паян янрать
Ман чĕрере хавхалануллăн.
Çĕнелнĕ халăхăм, шанап,
Эс ĕмĕрех телейлĕ пулăн.

* * *

Пысӑк мар эс, пӗчӗк шыв кӑна.
Чулсене ҫӑватӑн эс, вылятӑн.
Ачасем пек шавлӑн кунӗпех —
Шавламасӑр, шӑппӑн ҫеҫ юхатӑн.

Ӑҫталла васкатӑн эс, чупатӑн?
Аякра-и сан каяс ҫулу?
Тен, малта пысӑк чулсем нумай пуль.
Тен, каяс ҫулна хупласҫӗ пуль.

Вӗсене пухса вӑйна ҫӗтерӗн,
Тен, кайсан-кайсан — ҫухалӑн та?
Шӑнкӑртамӑм, савнӑ Шӑнкӑртамӑм,
Сан яту ҫапах ҫухалмӗ тек.

Илтӗнет-ҫке, шӑнкӑртатнӑ евӗр
Сан хитре яту хӑлхасенче.
Ҫук, темле пулсан та хатӗр эпӗр
Упрама ятна чӗресенче.

* * *

Ман Шăнкăртам çыранĕсем тавра
Чĕр çăлкуçсем чылай, хăвах куран.
Çăлкуç патне ак эп пырса тăратăп,
Хумханнă кăмăлпа ăна тăнлатăп.

Асаттесем юратнă çак çăла —
Кунта ватти-вĕтти куллен вăй илнĕ.
Сипленĕ йывăр суранне ялан,
Асамлă шыв, туятпăр, чăн та, пиллĕ.

Çăмăлах мар çав ĕлĕк пулнă пурнăç:
Çынсем тертленнĕ вăрманта, хирте.
Хавас хĕлхемĕ сӳннĕ, çитнĕ хурлăх,
Яла пулăшайман çăл шывĕ тек.

Юрлать çăлкуçĕ, кĕвĕ кĕвĕлет,
Хавал парса мана ĕнентерет:
“Чăваш поэчĕ эс! Мала пăхатăн,
Хăв халăхна та çул тупса паратăн”.

Ман Шăнкăртам çыранĕсем тавра
Чĕр çăлкуçсем чылай, хăвах куран:
Вĕсем тăвансене аса илеççĕ,
Мана та, хăй хĕрне, телей пиллеççĕ...

* * *

Кун çути килетех,
Çар хёвел тухатех!
Хура вăй паранать,
Тĕрĕс пурнăç пулать.

Çĕр çинче мĕн шырать
Çын тени тĕнчере?
Ыррине пит шанать
Кĕтет çĕн ĕмĕре.

Анчах ĕмĕр хапхин
Уçма çук сăлăпне.
Çыннăн пур çав хуйхи,
Тупаймасть ирĕкне.

Хĕсĕнсе ларнăскер
Пĕр пĕччен тĕрмешет.
Хура вăй çеç — тискер —
Этеме хĕстерет.

Таврара пĕтĕмпех
Йынăшни, макăрни.
Пур енчен ĕç çынни
Чĕререн тарăхни.

# ÇЕÇПĔЛ МАЛАШĔ

Вĕсем çитрĕçех!— Çеçпĕл кĕтнĕ
Çут ăслă чăваш ачисем.
Вĕсем пур чухне шанчăк пĕтмĕ,
Вĕсем — самана сассисем.

Айхи, Теветкел, Петĕр Эйзин
Тата Сементер те Айдаш
Халь пулчĕç ăста кĕнекеçĕ:
Вула та хак пар, тус-юлташ.

Энтип Ваççине те хаваслă
Куçпа вуласа киленсен,
Эп калăп тата çирĕп саслăн:
— Ан юлăр кун-çул уттинчен!

Ку — Çеçпĕл сăмахĕ!
Çапах та
Вăл пирĕн сăмах, тусăмсем,
Пире çĕкленӳллĕ вăй патăр
Çĕн шухăш тата чĕр сăнсем.

Усман-ха пуçне пирĕн халăх —
Пăхать çивĕч куçлăн мала.
Çынсен куçĕнчен чăр! пăхмалăх
Туптар-и эппин ăс-хала?!

Ч-36492
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

“Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем!”—
Тесе те калар пултарулăх
Çулне шыраса, тусăмсем.

Тĕнче илемне те туяр-и,
тупар-и сăнарлă сăмах?
Ăсталăх вăл — шанчăк кăварĕ:
“Кам “Çук!” тет — ун чунĕ чăлах!

Ку — Çеçпĕл сăмахĕ!
Çапах та
Вăл пирĕн сăмах, тусăмсем,
Вăл ÿсĕм çулне такăрлаттăр,
Вăй илтĕр юратнă чĕлхем!

* * *

Кайӑк хурсем вӗҫеҫҫӗ тӳпере,
Инҫе ҫула каймашкӑн вӗсем тухнӑ,
Тулта кӗрхи ҫанталӑк, ку ман вӑхӑт,
Эп чӗререн кӗтетӗп кӗр кунне.

Октябрьте эп килнӗ ҫӗр ҫине,
Гороскопа пӑхсассӑн эп — Виҫе.
Ҫак пурнӑҫа виҫсе танлаштаратӑп,
Пур хурапа шурра виҫсе тухатӑп.

Кӗр ҫумӑрӗ чашлаттарса иртсен
Вӑхӑтлӑха тӳпе кӑшт уҫӑлать.
Ӑшши те сахал мар пек ак кӑҫал,
Ҫапах чуна сив ҫумӑр пусмӑрлать.

## АСЛӐ АЛМАНЧӐ,
## ЭС МАН АСӐМРА.

Пуйӑссем тақта ирте-ирте каяҫҫӗ,
Кайӑксем вӗҫес Алманчӑ еннелле.
Хӑйсемпе пӗрле пымашкӑн сас параҫҫӗ.
Сисрӗҫ туйӑма, пӗрле вӗҫес килет.

Ман ҫуралнӑ ялӑм, Аслӑях Алманчӑ,
Эс туятӑн-им халь хӑвӑн илемне?
Ҫуртусем капмар, кун пеккине курманччӗ,
Хӯхӗм сад пахчийӗсем килсеренех.

Яланах пӗрле, санран пулман эп уйрӑм,
Нихӑҫан манмастпӑр эпӗр пӗр-пӗрне,
Малтанах сисмен те — тунсӑх пусрӗ, туйрӑм—
Ял енчен ӳкейнӗ ҫумӑр пӗрчине.

Сивӗ ҫумӑр капланса килес пулсассӑн,
Эс ҫакна пӗлсем: хурланӑп чунтанах.
Аслӑях Алманчӑ, эсӗ ман хавасӑм,
Сив ҫиле сирсемччӗ, эп шанап сана.

Аслӑях Алманчӑ, эп сана асилӗп,
Эс хӗрӳ ӗҫре те савӑк юрӑра.
Ырӑ ӗмӗтлӗн сана курмашкӑн килӗп,
Нихӑҫан та тухмӑн манӑн асӑмран.

* * *

Чĕремрен шăранса
Ман тухать савăк юрă,
Çĕр çинчи каччăсем
Халь илтеççĕ ăна.
Юррăма итлесессĕн
Паттăрсем ӳссе тăрĕç:
Пĕчĕкки, пысăкки —
Пулĕç — пурте пĕрле.
Анĕç тинĕс тĕпне,
Ту çине те хăпарĕç.
Хирсенчен тинĕс тăвĕç
Ялĕсем чечекленĕç.
Çĕршыв çийĕн хăпарĕ
Ялкăшса çут хĕвелĕ,
Ирĕн пурнăç хĕвелĕ —
Кашнин пичĕ çинче
Ялкăшса хĕмленсе,
Çуталса кăна тăрĕç.

# ТӐВАН ЕН

Ман асрах-ха кунта выляни,
ашкӑнни,
Ват хырсен шӑплӑхне
киленсе сӑнани,
тӳпере ҫӑлтӑрсем йӑлтлатса
куҫ хӗсни,
Ман асрах-ха кунта ҫӑтмахра
пурӑнни.

Ман асрах-ха тӳпе,
кӑн-кӑвак курӑнни,
пӗлӗтсем чупнине тӗлӗнсе
ӑмсанни.
Ах, ӑҫта-ши, ӑҫта шав
чупатӑр эсир?
Пӗлӗтсем — кӑтрисем, якисем,
хитрисем?

Манаймастӑп сана, тӑван ен,
тӑван хир.
Манма ҫук ытарми вӑрманне,
хыр енне.
Вӑй паратӑр эсир, пулӑшатӑр
эсир.
Ҫӗн халпа таптаратӑр
ялан чӗрене.

# АННЕНЕ

Пире ёҫчен пулма вӗрентрӗн,
Ытарайми анне.
Эсех ӑс-хакӑла ҫӗнетрӗн:
"Юратӑр ҫынсене!"

Пӗррехинче вилмех пуҫларӑн,
Хавшарӗ сывлӑху.
Пире куҫран пӑхса каларӑн,
Ҫаплаччӗ сӑмаху:

"Ан нӑшӑклӑр,
Чунри хӗвелӗм —
Эсир-ҫке, ачасем.
Эсир пулсан ҫеҫ эп ҫемьеллӗ,
Эсир — ман ӗмӗтсем".

Вара коларӗ Валя йӑмӑк:
— Ан вил, анне, тӳссем!
Тӳссем!
Эп вӗренмесӗр тӑмӑп.
Кӗтсем кӑштах, кӗтсем.

Эп тухтӑр пулӑп.
Пур чиртен те
Сыватӑпах сана...
Эп хамӑн йӑмӑка ӗнентӗм —
Халь тухтӑр вӑл, чӑнах!

Сана läплантарма пĕлмерĕм,
Хам çăтрăм куççуле:
“Çыравçă эп пуласшăн!— терĕм.
Тĕпчем, ĕçлем куллен.

Сан кунçулу çинчен те çырăп,
Юратнă çын — анне!
Çак ĕмĕте эп тытăп çирĕп,
Пилле ял сăвăçне!...”

Пире итлерĕн эс, аннеçĕм,
Пиллерĕн çын пулма,
Хуллен, хуллен çулсем иртеççĕ,
Асăнмалли нумай.

“Анне” тесе пире чĕнеççĕ
Халь хамăр ачасем.
Пуласчĕ пирĕн те вĕсемшĕн
Юратнă аннесем.

* * *

Тулта тăман çавăрттарать пĕр вĕçĕм,
Эпĕ пӳртре вырăн çинче выртатăп.
Часах киленĕп эпĕ ыйхăра —
Асамлă сас илтетĕп хăлхара.

Таçти-таçти çĕрте пек эп çӳреп,
Ăш хум ачашшăн сĕртĕнет.
Вĕçсе çӳрет пек юмахри чĕкеçĕ,
Вăл ăш хумпа пит çепĕççĕн пуплет.

Ун сассинче туятăп эпĕ канлĕх,
Ачаранпах паллатăп ку сасса.
Хавхалану та ирĕклĕх пиллет вăл.
Шанатăп савăк пурнăç пуласса.

# ХĔР-ТАНТĂШĂМА

*Алина Хрисанфовна Лукияновăна*

Пуçласа санпа тĕл пултăмăр
Аслă шкулăн çемьинче.
Пурăнăç çулне те тупрăмăр
Конспектсем тĕпче-тĕпче.

Ма чăвашăн хĕрĕ-ывăлĕ
Пуçласа курсан сана,
Тĕлĕнсе çӳрерĕ тăвăллă
Туйăмпа сăна-сăна.

Куçусен кăвак хаваслăхĕ
Каччăсен чунне кăвак
Çулăмпа çунтарчĕ сасăсăр —
Сисрĕн Эс çакна хăвах.

Çеп-çемçе чĕлхӳн тирпейлĕхĕ
Парăнтарчĕ кашнинех.
Юмахри пике чиперлĕхĕ
Ăмсантарчĕ тем пекех.

Инкекре те пулăшатăн эс
Тараватлă чĕлхӳпе.
Кун çинчен нумайăш асăнĕç
Чĕрери асилӳпе.

Тен, Лаурăн çĕн сăнарлăхĕ
Килчĕ чăваша санпа.
Ăмсануллă чун çеç тарăхĕ
Çак эпитетшăн саспах.

Ку пулманччĕ чăнлăх тĕлĕкĕ!
Йăрăс пӳллĕ пикене
Туслăхра пит лайăх пĕлтĕмĕр,
Куртăмăр çын илемне.

Пултаруллă журналист! Эсĕ!
Пурăнатăн халăх чĕринче.
Чăваш чĕлхине сӳнтермĕн
Яту тăрĕ ялан çĕкленсе.

Кун çинчен нумайăш асăнĕç
Чĕрери асилӳпе.
Эс пурри, Алина, савăнăç,
Куçунта — кăвак тӳпе!

## Хӗрӗме “ирӗклӗ йӗркесем” ИРИНӐНА

Пин-пин алăллă пулсан
пин-пин аллăмпа сана
ыталăттăм хавас.
Пин-пин чӗре тапас пулсан,
пин-пин чӗрем ăшшипеле
телейлӗ ӗмӗр сунăттăм,
Анчах ăшчик темле çунсан та
чӗре пӗрре çеç.
Мӗн тăвас?

Тип йывăç тымарне чӗртме те
пултарăн эс!
Сив çумăрăн сив чаршавне
кăвак хӗлхемлӗ куçусем
шăтарчӗç юратун сӳнми
кăварӗпе, чӗкеçӗм.
Юратăва çеç пайлама
май çук, май çук.
Чӗре пӗрре çеç!
Мӗн тăвас?

Тасалăхна упрас тесе
эс янкăр тӳпере шыран
юратнă ăмăрткайăкна.
Туту кулать, туту чӗтрет

таса юратăва курса
çĕн шанчăк тупнăран.
Чун аслă та çунатлă
пулсассăн çеç ăнланăн, хĕрĕм:
çунатлă шанчăк — эсĕ ху.
Пĕрре хавас, тепре салху
шухăшсемпе çул шыраса
ăнланăн эс ăраскална:
вăл уçă кăмăллă, чее.
Ăçтан килет-ши ку сăлтав?
Калас-и? Хăвăнтан!
Чипер хĕрсен шăпи — ик тĕрлĕ.
Хуйха-суйха пайлас тесен,
чĕре пĕрре çеç! Мĕн тăвас?

*Астăвăм çырăвĕ*
*Тамара Васильевна*

# КУДРЯШОВĂНА! ÇĔНĔ ШĂМĂРШĂ ХĔРНЕ

Хĕр-тантăшăм!
Хутран-ситрен эп халь те
Итлетĕп киленсе сан сассуна.
Эс — шăпчăк саслă!
Ĕмĕрех çуталтăр
Сăну ман асăмра — телей сунам!

Чун ăшшине санра эп туйрăм лайăх,
Ыр канашлу çăлатчĕ инкекрен.
Сан чӳречӳ сакки çинче саркайăк
Юрлатăр çур çитсессĕн ирсерен.

Çăлкуçĕ пек таса ыр кăмăлушăн
Тав тăвăп ĕмĕр-ĕмĕр эп сана.
Ăраскалун тивлечĕ пулĕ хушăн,
Çав тивлете эп хам та ăмсанам.

Сан чĕрӳнти пуян тĕнче нихçан та
Чухăнланмасть.
Вăл савăнăç парать
Çак самана çулне санпа, хĕр-тантăш,
Шăпа пӳрсен утса тухатпăрах.

Çул телейне çăлать тăванлăх, туслăх —
Кирлех-и кун пирки пит калаçма!
Шăл хăйракан тăшман чĕри — çур пуслăх,
Пĕлет-и вăл ырра сума сума?

Апла пулсан, çĕр хут, пин хут курсамччĕ
Эс çĕмĕрт çурăлса тăкăннине.
Ыр сунаканшăн! сӳнмĕ çутă шанчăк,
Вăл çутрĕ пирĕн ĕмĕт çăлтăрне.

*Мана вĕрентекен пĕрремĕш учительницăна Куцыпина Валентина Николаевнăна халаласа.*

# ÇАПЛИПЕХ-ХА ĂС ПАРАТĂР

Хăмăр куçлă, çивĕчĕ ун вăрăм,
Яштака, хитре вĕрентекен
Ăс парса калать: вĕрен те тăрăш,—
Куç илместпĕр эпĕр ун çинчен.

Кăмăлăр ытла та ырăран-ши
Тек туртаттăр хăвăрăн енне.
Тав туса эп çакăн пек каласшăн:
Эсир пирĕн — иккĕмĕш анне.

Аларан тытса çырма вĕрентрĕр,
Чăннипе — вĕрентрĕр пурнăçа.
Врач, ертӳçĕ, лётчик ...
çитĕнтертĕр
Эпĕ хам та тухрăм сăвăçа.

Асăмра çаплах умра тăратăр:
Хăмăр куçлă, вăрăм çивĕтпе.
Ачасем эпир сире тăнлатпăр,
Ăсăмра çаплах умра тăратăр:
Хăмăр куçлă, вăрăм çивĕтпе.
Ачасем эпир сире тăнлатпăр,
Ăс парса тăратăр çаплипех.

* * *

Тўпере епле халь тăрăлтаттарса,
Савăнса юрлаççĕ çамрăк тăрисем.
Тăвалла утатăп эпĕ савăнса
Аслă урамра уй-хир те вăрмансем.

Савăнса пăхатăп тăван ял тавра,
Пуçăмра выляççĕ тĕрлĕ шухăшсем.
Манăн килĕм, ялăм — яланах чунра,
Чĕрене çĕклеççĕ çĕнĕ юррисем.

Таврара илемлĕ те паха сăнсем,
Чунăмри тасалăх ўснĕçем ўсет.
Вĕç эс, çутă ĕмĕт, уçлăха çитсем,
Пурăнăç сасси халь ыр тивлет пиллет.

# ÇУРКУННЕ

Пурнăç туйăмĕ чуна çĕклерĕ.
Аякра, лере — кăвак инçет.
Ĕмĕтре хирте вĕçсе çӳрерĕм,
Таврара халь çуркунне çиçет.

Сар хĕвел те чечексем! Илемлĕ!
Çут çанталăк хăвăрт чĕрĕлет.
Кам маттур — вăл яланах телейлĕ,
Манăн халăх ĕç çинчен пуплет.

Чечексем те ӳсĕрĕлнĕ ахăр
Сывлăмпа — ачашланаç çилпе.
Киленсе вĕсем çине пăхсамăр —
Пĕр екке лекетĕр вĕсемпе.

Çур юратакан çĕр хупăрланчĕ,
Илемленчĕ кавирпе — сăна!
Çăлтăрсен юмахĕсем каç-каçăн
Çупăрларĕç ман вĕри чуна.

# АКĂШ

Пĕлĕтлĕ май каçĕ таврара
Вут-хĕм тĕслĕ — куртăр-и?
Лăпкă акăшăм хăмăшлăхра
Кĕвĕлет мухтав юрри.

Акăшăм чунтан çапла юрлать:
Пит илемлĕ тăван ен.
Ыйхăма çухатнине пула
Мантăм Эп кану çинчен.

Аслă хурăнлăх-чăрăшлăхра
Сулхăнра чун уçăлать.
Ялсенче лăпкăлăхра
Ĕçпеле кун ăсанать.

Кам халь туслăх-юрату тупать —
Çав телейлĕ ĕмĕрех.
Çирĕп шанчăк чечекне çурать
Çĕнĕрен те çĕнĕрен.

# МАНӐН ÇӐЛТӐР

Кӑн-кӑвак тӳпере каççерен
Çӑлтӑрсем пинӗн-пинӗн çунаççӗ.
Шурӑмпуç ерипен çӗкленсен
Шупкалса куçӑмран çухалаççӗ.

"Çӗр çинче манӑн çӑлтӑр пӗрре"
Тейӗп санӑн сӑнна манаймасӑр.
Санпала çамрӑкланнӑ чӗре
Таптӑрах йӗксӗке пуç таймасӑр.

Манӑн çӑлтӑр ӳксен ӑнсӑртран
Эпӗ туслӑх мӗнне те пач манӑп.
Эс манпа юнашар утнӑран
Хӑруш мар сӑнсӑр кун çил-тӑманӗ.

* * *

Çут тĕнчере мана анчах
Паран пек пурнăç ăшшине:
Тен, маншăн çеç çуралнă эсĕ тĕнчере?
Санпа пĕрле чухне час-час
манатăп пурнăç нушине:
тен, хамăр телее тупмах
                    пĕрлешрĕ ик чĕре?
Нихçан сӳнми юратура
çамрăклăха упра-упра
куратпăр шартлама хĕллех
                    çурхи куна;
çапах та ĕмĕр иртиччен
эп сан тӳлек куçусенче
шанми чечек пулса юлам-и
                    яланах?

# ПАРСАМЧЧЁ САС

Вĕçес килет — çунатăм çук,
Йĕрес килет — тухмасть куççуль.
Эп тунсăх авăрне путсах
вилетĕп пуль?
парсамччĕ сас!

Хуллен иртет ман вăтану
Хуллен иртет ман ютшăну.
Манран писсен те çав-çавах
юлать асаплă туртăну.

Çакна пĕлсех эп сан ятна
пăшăлтатăп ăшăмра.
Юратури чун асапне
Куратăп тĕкĕрти сăнра.

Эс, çамрăклăх, килен пĕрре!
Антив, эс вăйлă пулинех,
Çак юрату тĕнчи пĕрех
Çĕнтерчĕ манăн чĕрене.

* * *

Çĕмĕртсем шап-шурă
        çеçкере ларнă пек
Эсĕ, пурнăç, хўхĕм-çке
        сĕре,— терĕм эп.
Шăпчăк юрласассăн пахчара
        сан куллу
тем систерчĕ. Мĕн-ши
вăл ара?! Тĕлпулу!
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхса иртет урамра,
Ăшă сăмахна чĕрем кĕтет.
        Йăлăмра.
Юратусăр пур-ши çич ютсен
        тус-тăван?
Ĕмĕр вăрăм пултăрччĕ тесе
        кĕлтăвам.

# ÇУРХИ ВĂЙ

Шартлама хёл иртрĕ,
Çитрĕ çуркунне.
Шыв-шуртан уй типрĕ,
тупрĕ хăй сăнне.

Симĕс пурçăн евĕр
хумханан калча
кăмăла сисмесĕр
Çупăрлать час-час.

Çамрăк сăвăç чунĕ
Çур чечекĕ пек.
Эп пăлханăп, çунăп,—
ма пулам, сивлек?

Ентешсем ĕçлеççĕ
уй-хирте, ялта
Пурасем ӳсеççĕ
ваи-хăват пуртан.

Çĕн çуртра çĕн мăшăр
Туйĕ сикессе
Калаçаççĕ ăшшăн
кӳршĕ-аршăсем.

Çĕнĕ юрă-çемĕ
тыткăнлать чуна.
Саламлатăп çĕнĕ
ёмĕтлĕ куна.

* * *

“Ман юрату эс!”— çакнашкал хавас
Сăмах илтейменрен çанран час-час
Чуна ыраттаран сăмахсене
Чулсем пекех пухатăп хăш чухне.
Эп ăрăмçă пулаймăп пурпĕрех,
Ман кăкărти суранлă чун пĕрре.
Анчах чултан та йывăр сăмахпа
Переймĕн çынсене. Ку — ман шăпа.
Хам ăсăмра хĕрарăм тивĕçне
Эп пурпĕр çитересшĕн ха вĕçне.
Апла пулсан, Çĕн куншăн савăнам,
Чечек татса пуçкăшăлĕ çыхам.
Ăна парнелĕп хамăн хĕрĕме —
Упратăр вăл эп панă илеме.

* * *

Çурхи шывсем кӗрленӗ чух кӳлӗсемпе кӳлленчӗксем
Сӑн кӗртрӗç пирӗн çӗр питне.
Вӗсем — çӗршыв тӗкӗрӗсем

Тӗнче шавне хупла-хупла эс çитрӗн та юратупа,
Шутла-шутла пуç çаврӑнчӗ: эп юлтӑм тарӑн шухӑшпа.

Куçран пӑхать çурхи хӗвел, куçра — ман ӑшӑ шевлесем,
Юратупа, çухатупа çавах та сивӗнчӗç вӗсем.

Хӗвел тесе мана куçран тинкертӗн эс чеен,
Ман ӑшӑ шевлесем вара çухалчӗç сан çинчен.

# ПАРАДОКС

Ыр туйӑмсем те “резервацире”
пулаҫҫӗ тепӗр чух.
Пурне те шанакан чӗрен
нихҫан та хӳтлӗх ҫук.

Усал-тӗсел хуҫалансан тӑрук
кӑварланать чӗрем.
Ҫын тивлетне ҫухатнӑран хӑш чух
тухатӑп “резервацирен”.

# АЧАЛĂХ САССИ

Курăнатчĕ пӳртрен кантăк витĕр
Хурăнсем тата пирĕн кив шкул.
Курăнатчĕ хиртен ун пахчи те,
Сар хирсемлĕ вăрман, аслă çул...

Шухăша та илем çеç кӳретчĕç
Вĕççĕр-хĕрсĕр уйсем, кӳлĕсем.
Темĕн чухлĕ хĕр-тантăш çӳретчĕ
Ял урамĕсенче хĕвĕшсе.

Эп "Патан кӳллине" те манмастăп:
Çырларан таврăнсан ушкăнпа
Çакăнта каннă эпĕр. Тунмастăп,
Сăвăсем те çыраттăм кунтах.

Ушкăнпа сахал мар шухăшланă
Ыр малашлăх çинчен.
Çак сăнсем
Чĕрере вут чĕртсессĕн ан манăр
Тахçанхи туслăха, тантăшсем.

Саламлатчĕ пек çеçпĕл чечекĕ
Юр кайсан вăрманта час-часах.
Çавăнпа Аслă Çеçпĕл хисепĕ
Ман ăшра та пырать вăйлансах.

Кам чунне çеç сунатлă туман-тăр
Мишша Çеçпĕл сăвви çамрăк чух?
Шухăшне анлă хир, сĕм вăрман та
Халь упрать-çке,
Ăна манас çук?

Çавăнпа пуль ачалăх сăвви те
Халь килет-çке аса, тусăмсем.
Курăнатчĕ пӳртрен кантăк витĕр
Эп вĕреннĕ кив шкул, хурăнсем.

# ÇУРКУННЕ ИРПЕ

Çуркунне ирпе
Эп тухап çада.
Таврана пăхса
Ас илеп сана.

Тутасем вара
Хăйсем тĕллĕнех
Пăшăлтатнă пек
Туйăнаç мана.

"Çил ачиçĕм, кил,
юрату ачи,
сĕртĕнсем мана,
ачашла кăна".

Нумай çул иртет —
Юрату сӳнмест.
Çил ачи çемçен
пите сĕртĕнет.

Çуркунне ирех
Тухап пахчана.
Çил ачи каллех
Çупăрлать мана.

* * *

Тирӗнсе ларчӗ манӑн чӗреме
Ҫивӗч йӗплӗ пӗр шелсӗр юрату.
Ҫухатрӑм эп яланлӑх канлӗхе,
Чун-чӗрене хӗстерчӗ ырату.

Ачаш та ҫамрӑк манӑн кӑкӑра
Ҫавӑрса тытрӗ хӗскӗч евӗрлех.
Ҫунса хӗмленчӗ харсӑррӑн чӗре
Мӗн кӗтӗ-ши вунҫиччӗре хӗре?

* * *

Çил тулаштăр, çумăр çутăр;
Хĕл кăлартăр çил-тăман;
Чактăр çутă, сӳнтĕр çутă,
Çул та курăнтăр аран.
Е çухалтăр — пурпĕрех
Маншăн ним хăрушă мар:
Çитĕпех çитес çĕре,
Эс пулсассăн юнашар.

* * *

Эп йăлăнатăп: “Юл, ан кай...
Тăхта кăштах хăть, тепĕртак...”
Юлма пачах та çук сан май,
Эс уйрăлатăн хăвăртах.
Эс пĕччен мар тухса каятăн
Кирек хăçан та, кашнинчех
(Сисмесĕр мар, сиссех, пĕлсех)
Телейĕме илсе каятăн,
Илсе каятăн савнăçа,
Илемлĕхе илсе каятăн,
Илсе каятăн канăçа...
Мана çапла эс çарататăн
Нихçан çаратмăттăн, анчах
Сан урăхла май çук пачах.

# ЭС ПУР ЧУХ

Эс пур чух хӗвеллӗ эпӗ
Эс пур чух телейлӗ эпӗ.
Эс пур чух пуян та эпӗ —
Манӑн пурте, пурте пур,
Хӑвӑртрах эс килсе кур.

## ЭСЁ ÇУК ТА...

Эсё çук та — эп пёччен.
Хăçанччен-ши, хăçанччен
Кунăм иртё сансăр,
Каç та иртё сансăр —
Эп сана курмасăр,
Ăшшăн калаçмасăр,
Эс мана савмасăр.

* * *

Таврара сив хӗлӗн касӗ,
Ҫилӗ чӗрере улать.
Вӑйӑм-халӑм весех пӗтрӗ,
Чарӑнмасӑр ӑш вӑркать.

Эс, савниҫӗм, манса кайрӑн
Манса кайрӑн та пӑрахрӑн.
Йӑл кулмассӗ куҫӑмсем
Питӗ хурлӑхлӑ вӗсем.

Ҫуркунне те час ҫитет,
Сар хӗвел кӗҫ илӗртет.
Сан сӑнна умра эп курӑп,
Вӑрман тӑрӑх лӑпкӑн утӑп.

Канлӗхе ҫухатрӗ чунӑм —
Ҫутҫанталӑк лӑпланать.
Пӗтӗмпех ман шухӑш-туйӑм
Халь ӑна ҫеҫ пӑхӑнать.

* * *

Асилетĕн-ши, савни, асилетĕн-ши
Сан чĕрҫӳ ҫине ҫуркунне ҫитсен
Шурă акăш пулса вĕҫсе аннине?

Асилетĕн-ши, савни, асилетĕн-ши
Сан чĕрҫӳ ҫинче эп ташланине,
"Шурă акăш" тесе мана чĕннине?

Палласа та мана илейместĕн пуль
Эсĕ уйăх хĕрне хăш чухне —
Пинеслу эп, савни, асилсем!

Ҫук, нимле те сиссе илеймерĕн пуль,
Чӳрече умĕнче йăл кулса
Эп ҫутатрăм санпа пĕр пулса.

Манаймастăн мана, манаймастăн эс
Пикесем парăнтарнă хусах,
Ман сăнарăм ҫӳрет асунтах.

* * *

Эп саврăм чăваш каччине,
Анчах та манран вăл хăрарĕ:
“Пăтравлă эс тинĕсĕн хĕрĕ,
Савма шикленетĕп эп”,— терĕ.

Тĕл пулчĕ мана пĕринче
Патвар та кĕрнеклĕ пĕр каччă,
Çуралнă сив тинĕс енче
Ăш кăмăлĕпе парăнтарчĕ.

Пĕрре курнипех вăл юратрĕ,
“Санран хакли çук маншăн,— терĕ,
Куçу сан чăн тинĕс пекех”.
Асамлă вăйне парнелерĕ.

* * *

Тăрнасем вĕçеççĕ
Манăн çуртăм çийĕн.
Сассине параççĕ
Вĕçсе иртнĕçемĕн.
Тин кăна кунтаччĕ,
Кăшт тăрсан çухалчĕç.

Ах, тăрна, тăрнаçăм,
Хурлăхлă сассу сан.
Мĕншĕн хурланатăн
Çĕр çине пăхсассăн?
Аллăма суллатăп —
Салхуланчĕ чун ман.

Мĕншĕн хуйхăратăр?
Çу иртнишĕн мар-и?
Канас килнĕ вăхăт
Ку çулла килмерĕ.
Лăпкăлăх шырарăм —
Канăçлăх пулмарĕ.

# ЛАНТĂШ

Лантăш илĕр!
Лантăш татрăм
Вăрманта паян кăна.
Лантăш илĕр!
Лантăш пухрăм —
парнелем Сана ăна.

Чĕрĕ чечексем çиçеççĕ —
ан именĕр-ха пăхма.
Лантăш тупрăм —
Лантăш пухрăм,
ўркенмерĕм эп татма.

Чи малтан вĕсем тухаççĕ
Шăтарса çĕре часрах,
Çамрăк пикесем пухаççĕ
Вăрманта — Алманчăра.

Сивĕ çилĕ уй-хир тăрăх
Шăхăрса вĕрет, кусать.
Ман умра вара черченкĕ
Симĕс лантăшăм кулать.

Паттăр каччăсем пăхаççĕ
Куçĕ-пуçĕ алчăрать.
Лантăш чечекки пуçтартăм
Вăрманта — Алманчăра.

Лантăш илĕр!
Лантăш пухрăм.
Парнелетĕп кăмăлтан.
Ман чĕресĕм санăн пулĕ,
Ырă каччă, паянтан!

* * *

Эсӗ мӗн, савниҫӗм, шухӑш айне
пултӑн?
Сӑрхӑнать кичемлӗх хӑмӑр
куҫунтан.
Хуйхуна эс сир-ха, куҫҫульне
пытар-ха,
Пурнӑҫпа килен-ха, савӑнар
чунтан.
Тӑрнасем вӗҫеҫҫӗ — кӑнтӑртан
килеҫҫӗ.
Ҫуркунне тивлечӗ ӑшӑтать
ҫӗре.
Ҫутҫанталӑк ӑшшӑн
сапалать хаваслӑх,
пурӑнӑҫ телейӗ парнелет
пире.
Сан сӑну салхуллӑ, хуйхӑ
ӑшне путрӑн,
пурнӑҫ ҫуль тумхахлӑ, кӑткӑс
вӑл чӑнах.
Хуйхуна вӗҫтер-ха, хӑвала
хӑюллӑн,
Каласамччӗ, тусӑм, ӑшшӑн
пӗр сӑмах.
Ҫӑлтӑрсем те ҫиҫӗҫ, сар хӗвел
йӑл кулӗ.
Илӗртӗ Алманчӑ
хӑйӗн хырлӑхне.
Пурӑнӑҫ — телей-ҫке, ӗмӗрех
вӑл пулӗ,
Тусӑмҫӑм, курар халь унӑн ырлӑхне.

* * *

Уляхра пуç кăшăлĕ эп çыхрăм,
Йăл кулса эс тăтăн ман умра.
Иртнĕ вăхăт.
Çухрăм хыççăн çухрăм
утрăмăр.
Хĕм йăлкăшрĕ куçра.

Вăхăтăн çул-йĕрĕ çăмăл марччĕ,
Çăмăл марччĕ телее тупма.
Халь пĕрле утмастпăр...
туслăх тарчĕ —
ан ыйтсам пуç кăшăлĕ çыхма.

# МУХТАВЛĂ ПУШКИН

Чăштăртатса ӳкет кĕрхи сар çулçă,
Мухтавлă Пушкин путнă шухăша.
Çулсем иртеççĕ...
Ун сăмахĕ юлчĕ
çынсен чĕрисенче. Чунри ăшша

Унра тупатпăр, сăвăсем çыратпăр.
Тăратăп эп те Пушкин умĕнче.
Çынсем иртеççĕ...
Пушкинрах шыратпăр
чуна ăшăтакан хитре тĕнче.

Поэт тăнлавĕнчен шăпăртатса
Кĕр çумăрĕн тумламĕсем юхаççĕ.
Çынсем кунта чечек çыххи хураççĕ
поэтăн сăввипе çунатланса.

# “МАНРАН, САВНИ, АН СИВЁНСЕМ, АН ЮТШĂН”

Эс пулмасан, каҫ шăплăхне туймастăп,
Эс пулмасан, чун канăҫĕ ҫĕтет.
Эп, тусăм, сансăр хамăн ĕмĕте
Ҫунатлă, ырă шанчăк параймастăп.

Ман ыйхă та ҫĕтет!
Ҫумра эс ҫукшăн
Кама-ши ӳпкелес? Кам пулăшать?
Манран, савни, ан сивĕнсем, ан ютшăн!
Эс сивĕнсен, мана нуша лăскать.

Ҫакна шута хумастăнах пулсан,
“Сывпул!” тесе эп пăрăнăп, ҫухалăп
Ăшри вутта сӳнтерĕп те кулса,
“тĕсси!” тесе ҫеҫ йĕкĕлтӳллĕн калăп.

* * *

Кӳршӗ-арша инкеклӗ кун
Салхулатсан эп чӗмсӗр,
Куҫпа пӑхатӑп-и ун-кун?
Инкек кулли пит сӗмсӗр.

Уҫатӑп кӳршӗ алӑкне
Ыр кӑмӑлпа тӳлеккӗн,
Тӳрех инкекӗн куҫҫульне
Шӑлса илесшӗн эпӗ.

Ман пулӑшу — чӗре сасси,
Ман пулӑшу — усламсӑр.
Ҫакна мансан,
Турра асил:
Вӑл паракан турамсӑр.

Чупса ҫӳрейӗп-ши вӑш-ваш?
Ҫынна кирлех-ши ҫынлӑх.
Ан пул-ха хыткукар, чӑваш,
Ҫынсемпеле пул ҫывӑх!

Ҫакна мансан Турра асил:
Вӑл паракан турамсӑр.
Килмест кунҫулӑн ыр сасси,
Ун ҫулӗ те пит ансӑр.

# ÇАМРĂКЛĂХ ИЛЕМĔ

“Эсех, эсех илем турри пуль маншăн, —
Куçран пăхса каларăн эс пĕрре.
Сана эп Афродитăпа тăваншăн
Юратăп, çунăп ĕмĕр-ĕмĕрех”.

Вара йăл култăн, çамрăклантăн эсĕ
Пилĕкĕме ачашшăн сĕртĕнсе.
Эп тăтăм именсе, сăмах чĕнмесĕр,
Сан сăмахна ача пек ĕненсе.

— Эп — сан шăпу!— тесе мана шантартăн
Куçусемпе чуна тыткăнласа.
Мана ĕненӳпе хавхалантартăн,
Ман шанчăк ӳсрĕ. Тăтăм эп кулса.

Телейлĕ кулă пурнăçа хавaслă
Шухăшсемпе илемлетсен, сана
Юратрăм эп ĕмĕтсенчи пуласлăх
çулне курса...
Ăмсантăн эс мана...

Халь урăххи тупа тăвать: “Эп саншăн
Вилме те хатĕр,
Маншăн эс — пĕрре!
Сана эп Афродитăпа тăваншăн
Юратăп, çунăп ĕмĕр-ĕмĕрех”.

* * *

Хам ăшăмра ĕмĕрлĕхех
Юратăва эп усрăп.
Ун чух мана çеç темшĕн итлемерĕн:
Епле манас çакна?
Эс урăх чечеке шырарăн пуль?
Кайран, тен, татрăн пуль? Эп сисеймерĕм.
Çук, çук! Пулман ку сисĕм çуккипе:
ман ĕненӳ çеç айăплă кунта.
Çапах та манмăп хырлăх вăрманне:
Асилĕве упрать вăл!
Халĕ те.
Тĕлпулусен ăшши чуна лăпкать пек,
Хумхантарать пек кăмăла тепре.
Ак, эпĕ тепĕр хут кунта
Пуçа усса тăратăп.
Кашларĕ хырлăх.
Кĕвĕллĕ сассем
Мана пăчăртасан куçран, сасартăк,
Шăпăртатса тумларĕ йӳç куççуль
Чечек çине ӳксе
Ахах-мерчен пек йăлтăртатрĕ вăл.
Сасартăк, чан сасси янрарĕ,
Янрарĕ вăхăт-вăхăт.
Тен, уйрăлу каçне
Асилтересшĕн пулчĕ инçетрен
Салхуллă чан сасси.

* * *

Пĕччен эп ҫĕрĕ-кунĕпе.
Эс ҫук та, пурнăҫ — тамăк.
Пĕр кунĕ маншăн — уйăх пек,
Эрнийĕ — виҫ ҫулталăк.

* * *

Каяс килмест те —
каймалла.
Утас килмест те —
утмалла.
Санпа юласчĕ —
юрамасть.
Телей çитессĕн
туйăнмасть.

* * *

Çут тĕнчере
Мĕн ĕмĕре?
Хĕвел — пĕрре,
Анне — пĕрре.

Хĕвел ăшши —
Хĕвел тухсан,
Анне ăшши
Чунра — ялан.

* * *

Эсӗ манӑн шухӑша пӗлместӗн,
Эсӗ манӑн тунсӑха пӗлместӗн.
Эсӗ манӑн савнӑҫа пӗлместӗн,
Эп пурне те пайлӑттӑм санпа.
Анчах эс ҫук, эсӗ ҫук манпа,
Эсӗ инҫетре,
Эсӗ инҫетре...

* * *

Шарт сиксе ваҫанса кайӑн,
Туйӑн чӗрӳ пушшине.
Эс мана темле чӗнсен те
Пӑхмӑп эпӗ сан енне.

Юрӑсем янраҫҫӗ уҫҫӑн,
Юрӑран кам сивӗнет?
Ман чӗрем ӑшшийӗ ҫиттӗр,
Ҫиттӗр сан чӗрӳ патне.

Эп пачах та кулянмастӑп,
Шелеместӗп иртнине.
Чӗремре ҫеҫ — тунсӑх, пӑчӑ...
Чухлаймастӑп сӑлтавне.

* * *

Кăн-кăвак куçăмсенчен
Шăрçаланса куççуль юхать.
Тен, çамрăк ĕмĕр иртиччен
Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç пулать.

Çăлкуç патне çитиччен
Ăш-чикĕм йăлт çунса тухать.
Ĕçĕттĕм те тăраниччен,
Куççуль çаплах шăпăртатать

Ĕçес тесе çăлкуç умне
Пĕшкĕнсенех чун тăвăнчĕ.
Сан ĕмĕлкӳ çăлкуç хумне
Ӳксе çухалчĕ, шăвăнчĕ.

Куççулĕпе тăварлансан
Пĕтет çăлкуç шерпечĕ те.
Мĕн пулнине мансам, мансам!
Анчах ан явăн ман тĕлте.

* * *

Эп — сан,
Эсё — ман
        Яланах
        Ялана.
Эпё памăп сана
Никама та нихçан,
Нихăçан, нихăçан.

* * *

Мӗн шавлатӑн эс,
Сӗм-хура вӑрман?
Ассӑн сывласа
Шухӑша каян?

Тӑвӑл ҫитнӗшӗн
Хуйхӑратӑн-и?
"Ҫил-тӑман килсе
Халь аркатмӗ-ши?"

Ан хӑра, вӑрман,
Эс тӑран патвар.
Турат хуҫӑлни
Йывӑҫ ӳкни мар.

Тӑвӑлӗ иртет,
Эсӗ те лӑплан.
Пӗчӗк катаран
Ҫитӗнӗ вӑрман.

* * *

Кётрём эп сана
Хäвäрт килессе.
Эс чухлатăн-ши
Хăвшăн çуннине?

Куçупа куран,
Чĕрӳпе туян
Сан сăнна, ятна
Манайманнине.
Мĕн пулчĕ мана?
Ăнланмашкăн хĕн
Тыткăнларăн-çке
Манăн чĕрене.
Пӳрт умне тухап,
Пĕр енче вăрман —
Тепĕр енĕ — сад,
Каяс хăш енне?
Çитрĕм уçланка,
Эс унта çаран.
Куртăн та мана —
Чупрăн вирхĕнсе.
Йăтса илтĕн те
Çӳле çĕклесе
Ятăма калан:
"Ман савни эс çеç!"—
Терĕн хĕмленсе.

* * *

Курман пек ан ту —
Ирĕкçĕрлеместĕп
Сан туйăмусене.

Сассу та салху,
Телей çитмен пек
Хурлăн илтĕнет.

Ăнлантăм сана,
Савнă пикӳне
Манайманнине.

Шăпăрт пулăпах,
Ним пулман пекех
Утăп малалла.

Каçарсам мана,
Эпĕ çуннине
Эс сисмен иккен.

Ман ята, сасса
Манса кай эппин,
Асапланиччен.

Чунри туйăмра —
Пĕтĕмпех тăман...
Авăтать куккук!

Ёнтӗ сывӑ пул,
Кӗркунне, хӗлле —
Ҫуркунне ҫитет.

Эпӗ пӗччен мар
Ман тавра вӑрман,
Патвар юмансем.

Мӗн каласси пур —
Ӳпкевӗм ман ҫук
Кӑмӑлна ан хуҫ.

* * *

Jуратaтăп,
Кĕвĕçетĕп
Эсĕ аякра пулсан.

Савăнатăп,
Мухтанатăп
Эсĕ маттур пулнăран.

Тертленетĕп,
Хуйхăратăп
Пăхнăçемĕн кантăкран.

Хĕмленетĕп,
Ялкăшатăп
Юрату кăварĕпе.

Хĕпĕртетĕп,
Киленетĕп
Эс мана çеç савнипе.

* * *

Çуҥасса
Çунтăн-çунтăн —
Хăвăртрах кĕллентĕн.

Кĕтессе
Кĕтрĕн-кĕтрĕн —
Кĕтсе илеймерĕн.

Юратса
Саврăн-саврăн —
Кăварланаймарăн.

Тунсăха
Путрăн-путрăн —
Ишсе тухаймарăн.

Куçупа
Пăхрăн-пăхрăн —
Парăнтараймарăн...

* * *

Нихҫан та кун пек хумханмаччӗ,
Чӗрем те тапмасчӗ ҫапла.
Мӗн пулчӗ мана каласамччӗ,
Мӗн-ма эс хуҫан кӑмӑла?

Мӗскершӗн чуна шуйхататӑн?
Кӗтменччӗ-ҫке эп ҫак куна,
Тен, эс хӗрхенмесӗр таптасшӑн
Хитре чечеке курсанах.

Мӗнех, чун хӳхлетӗр, ыраттӑр,
Аса илӳпе ҫеҫ йӑпантӑр.
Эп урӑх йӗместӗп, ӑнлан:
Таса юрату пулӗ ман.

Чӗремҫӗм чӗнет халь пӗр вӗҫӗм
Хӑюллӑн мала ҫеҫ утма.
Сар ҫулҫӑ урам урлӑ вӗҫнӗн
Мана илӗртет вӑл пӗрмай.

* * *

Кӗр кунӗсем ҫитсен сӑна-ха:
Ӳкеҫҫӗ ҫулҫӑсем вӑраххӑн.
Салхуллӑ, мӗскӗн сӑнупа
Иртсе пыратӑн урампа.

Е вӑрмана утса кӗретӗн,
Чӑтлӑхсенче пӗччен ҫӳретӗн,
Ҫапла шыран-ши канӑҫна?
Тупма май ҫук унта ӑна.

Уҫланкӑра ҫӗкленчӗ ҫулӑм,
Ӑна эс камшӑн чӗртрӗн, тусӑм?
Эп тупаймарӑм канӑҫа,
Чӗрӳ хавшанӑ, хытнӑ ҫав...

* * *

Паянхи кӗр кунӗ
Туйӑнтӑр ҫу пек!
Юратма пӗлсессӗн —
Эп ялан чечек.

Аслати сасси пек
Сиввӗн калани
Нихӑҫан ан пултӑр,
Ҫиттӗрччӗ кӗтни.

Юрату пӗтсессӗн —
Пулӑп ҫил-тӑман.
Сана ҫес юратӑп
Ӑшшӑн, чун-вартан.

Ан кулян савниҫӗм,
Кӗр ҫывхарнӑҫем.
Юнашар пулсан эс,
Эп ялан чечек.

* * *

Чĕремри юрату туйăмне
Ĕненмерĕн, чуну санăн хытнă.
Хама хам туймиех йĕтĕм хыттăн
Куççульпе йĕпетсе хĕр сăнне.

Пурнăçра пур çĕрте те илемлĕх,
Чĕремре вара манăн суран.
Пĕр чĕнмесĕр эс пăхрăн сивлеклĕн
Йĕплесе кулнă пек такамран.

Шурлăха — хам кĕтмен те — кĕç путрăм,
Кам хăтарĕ-ши ĕнтĕ мана?
Халиччен ал параттăнччĕ, тусăм.
Шанма пулĕ-ши тетĕп сана?

Эп ыйтатăп санран: халиччен эс
Пулăшнă-ши кама та пулсан?
Урамра курсанах ăнсăртран
Куçăма тартнă май чĕмсĕрлентĕм.

Тĕлĕк курнă пек туйăп хама
Асăмра сăнару ĕмĕр пулĕ.
Е тĕтрелĕх ăшне кĕрсе путăн,
Е çухалăн, тек тухмăн ума.

* * *

Ăнлантăм пит аван сана,
Эп çуннă саншăн тахçанах.
Эсех-çке татрăн хěлěхе,
Таптарăн ман çеçкелěхе.

Хěмлентěм, çунтăм саншăнах,
Вăй хутăм ěнтě кăлăхах.
Çук, ăнланмарăн ман чуна,
Юрра хăвартăн тăлăха.

Ялан эп янрăп хěлěх пек,
Ялан эп пулăп çуркунне.
Манран илеймěн хěм чечек,
Илтеймěн ман сăмахсене.

* * *

Ылтăн кайăкăм, пĕлес килет чунтан,
Эс кала суймасăр, мĕн çинчен юрлан?

Ылтăн кайăкăм, ыйтатăп чĕререн,
Эс юрла телей те юрату çинчен.

Эп çиçсе тăратăп çутă тумлампа —
Эс çапла юрлатăн халĕ юрăра.

Эпĕр пурте тинĕсĕн тумламĕсем,
Çавăнпа эпир кашни пĕр тан çынсем.

* * *

Ача чухне эп юрататтӑм
Ян янракан шкул картишне.
Эп ылтӑн кайӑк та курсаттӑм
Кайсассӑн хырлӑх вӑрманне.

Сад пахчинче эп асӑрхарӑм
Шур чечексем ҫурӑлнине.
Ирпе ирех курсаттӑм мар-и
Уйра ҫут сывлӑм ӳкнине.

Ача чухне каҫ-каҫ тӑнлаттӑм
Ҫут ҫӑлтӑрсен тӑп шӑплӑхне.
Пӑшӑлтату та, хытӑ сас та
Пит ҫывӑх халӗ чӗрене.

# ТАВРĂННИ

Каллех пуласчĕ пĕчĕк ача евĕр,
Курасчĕ ман ача ачашлăхне.
Чун-чĕрempe тасан, пĕр систермесĕр
Çитесчĕ манăн ырлăх тĕнчине.

Мана каç-каç юмахсен асамĕ
Çӳреттĕр çывăхра та аякра.
Чуччу çинче ура тапса ярнам-и
Çуралнă ялăмра е хырлăхра.

* * *

Ак каллех çуркунне:
Ешерет çĕр анне.
Ак каллех сар хĕвел:
Хĕвел кĕчĕ хĕве.
Ак каллех юрату:
Эс унран юрă ту.
Ак каллех сан сăну:
Халь санпа çыхăну.
Ак каллех, ак каллех:
Çапла-ши ĕмĕрех?..

* * *

Эп хырлăха утса кĕретĕп —
Тӳлек, сăваплă вырăна.
Шăнкăртатать шыв, эп илтетĕп,
Ача сасси пек туйăнать.

Чун чĕремпе çунса тăратăп,
Шавлать вăрман, итлеп шавне.
Кашни турат мана, туятăп,
Уçса парасшăн çĕннине.

* * *

Каллех кунта эп, — савăнатăп, —
Çамрăклăхра эп хăнара.
Çук, кирлĕ мар мана никам та,
Астăвăм халĕ ман çумра.

Эп сывлăмлă уйра çӳретĕп,
Итлеп ачалăх сассине.
Эс, çамрăклăх, ума килетĕн
Савăнтарса чун-чĕрене.

Тăпах ларма эп юратмастăп,
Куçусăр пурнăç — маншăн çук.
Çĕн вырăнта çĕнни куратăп,
Унтан — каллех выртать ман çул.

Вăрман сăр тĕслĕ. Систермесĕр
Умри сукмак таçта çĕтет.
Кас-кассăн лăпкă ахрăм евĕр
Ау! Ау! Сас илтĕнет.

* * *

Эс мана нимле парне ан пар,
Çывăхра тăрса пул юнашар.
Çакна çеç ыйтасшăн эп санран:
Юратуллă та нихçан суйман
Чĕрӳне мана эс парнеле,
Пултăр ĕмĕр вăл манпа пĕрле.

# ХЫР

Чӳречене эп щуҫӑмпа уҫатӑп.
“Кӗрсем, кӗрсем”,— чӗнетӗп эп хыра.
Ман таврара вӗсем нумай ытла та,
Хырсем, хырсем, хырсем йӗри-таврах.

Хӗвелпеле ав сирӗлет тӗтрелӗх,
Хыр йӗпписем ҫинче тумлам ҫиҫет,
Кунта хырсем, хырсем епле илемлӗ,
Кас-кас вӗсен юрриийӗ илтӗнет.

Хыр сухӑрӗн шӑршиийӗ ӳсӗртмелӗх
Ман сӑмсана пырса ҫапать тӳрех.
Эп сӑввӑмра ялан аса илмелӗх
Хыра мухтатӑп, мухтӑп ӗмӗрех.

* * *

Тунсăхлăн эс ман çине пăхатăн,
Ма çаплах чĕнетĕн пахчана?..
Чечексем те кайăксем, туятăп,
Тахçанах кĕтеç унта мана.

Пурпĕрех пыраймăп. Ăнланатăп:
Пахчара утан хаш! сывласа
(Шухăшпа кунтах эс ăнтăлатăн),
Сивĕ вăй тăрать мана тытса.
Пирĕн хушăран çĕлен кайсассăн
Çилленсе эп пурăнмăп ялан.
Ачине те амăшĕ çапла
Вăрçкалать те каçарать васкавлăн...

* * *

Вăрмантан та уй-хиртен
                эп килтĕм,
Килтĕм ҫырантан та кӳлĕрен.
Ыратмасть чĕрем, вăл ҫирĕп питĕ,
Чун тăвăлнине те пач сисмен.

Шутламастăп — хăть миҫе ҫул
                иртгĕр,
Калаҫап чечексемпе, шывпа.

Эп вăрах, тен, утрăм тăвăл витĕр
Тĕл пулас тесе паян санпа.

* * *

Таврара, ав, ахăрать çил-тăвăл,
Çавра çил çавăрттарать кăна.
Ăш-чикре те тăвăллă. Мĕн тăвăн?
Кăшт та лăпланмассăн туйăнать.

Пурнăçра ман япăххи те пулчĕ,
Сахал мар тĕл пултăм ыррине.
Ахăрчĕ тăман, хĕвел йăл кулчĕ,
Лайăххи пулать-ши малашне?

Çавра çилĕ алхассан лăпланчĕ,
Таврара çанталăк тăп тăрать.
Пит черченкĕ кăмăлăм халь манăн,
Асăрханнă пек шур юр çăвать.

* * *

Атӑл, мӗншӗн хумханатӑн,
Тарӑхса та пӑлханса.
Шурӑ кӑпӑк кӑларатӑн
Чулсене ташлаттарса.

Санӑн ҫырану пит ҫӳллӗ,
Хӑш чухне вӑл сад майлах...
Хумсене халь килӗшӳллӗн
Ҫук-ши ҫавӑрма калла?

Кун-ҫӗрсем хыҫа юлаҫҫӗ,
Таврӑнаймӗҫ иртнисем.
Тинӗсе хумсем куҫаҫҫӗ
Каялла ҫул ҫук вӗсен.

* * *

Шăнтать...
Шутлатăн пуль: çак касхине,
Тен, юрату пăрпа хупланчĕ?!
Анчах, тăнла, пăр айĕнче
Тапса тăраççĕ, ăнлансамччĕ,
Çăл куçĕсем. Вăй - вĕсенче!
Пăр айĕнчех тапса тăраççĕ!..
Чĕре те вăй пухать çаплах.
Çут пăр каять те - хупланаççĕ
Çак çырансем йăлт шывпала.

* * *

Хӗвел ҫаврӑнӑшӗ тухӑҫалла
Хуллен-хуллен ҫаврать пуҫне, куратӑп.
Ҫӗн кун килет вӗр-ҫӗн юратулла,
Ӑна кӗтсе савнатӑп эп,
Савнатӑп та —
Кулатӑп.

* * *

Çиллĕ Шупашкаран каçĕ,
Пĕлĕтсем хула çинче.
Темшĕн тунсăхлăн юрлаççĕ
Кайăксем çырма енче.

Çитрĕм эп ялтан... Туясчĕ...
Куççенчен куççуль юхать...
Çулăмпах-çке çунчĕ каччă...
Çил ыраш патне туртать.

*Апрель 1998 г.*

* * *

Мĕн тĕленнĕ — астумастăп,
Тĕлĕкĕ пит хăрушла.
Хумханса часах вăрантăм,
Тем пăтратрĕ кăмăла.

Каç мана асап кăтартнă
Пăтрашуллă тĕлĕкре,
Куççӳле вăл кăларттарнă,
Эп йĕпетнĕ минтере.

Ман чĕре çапла йĕрет-ши,
Мĕншĕн асапланмалла?
Малашне мĕскер кĕтет-ши,
Мĕншĕн ун хур курмалла?

# ТАНТӐШ, ЛАР-ХА ЮНАҪШАР, ИКСӖМӖР ПӖРЛЕ ШУТЛАР

1. Пӗрре, пӗрре — иккӗ.
Иккӗне — пӗрер.
Сахал мар-и?
Ҫитӗ,
Пӗрершер илер:
Пӗр кишӗрӗ — сана,
Тепри юлать мана.

2. Иккӗ ҫумне пӗрре хушар.
Миҫе пулчӗ?
— Виҫҫӗ!
Унран пӗрре кӑларар.
Миҫе юлчӗ?
—Иккӗ!
Ик хӑярӗ сан.
Пӗр хӑярӗ ман.

3. Виҫӗ улма, пӗр улма,—
Пурӗ ман тӑват улма
Анне, ме-ха пӗрне.
Атте, тыт эс теприне.
Йӑмӑк, ил виҫҫӗмӗшне.
Эп илетӗп юлнине,—
Миҫемӗшне?
Иккӗ, виҫҫӗ — пулчӗ пиллӗк.
Атте ҫыхрӗ пилӗк милӗк.

4. Пилёк хур та тепёр хур. —
Ултă хур кунта, ав, кур.
Пилёк хурё пёрлерех,
Пёри ишет пёчченех.

5. Пирён пилёк улмуççиччё,
Иккё лартрăмăр тата.
Пиллёк, иккё — пурё çиччё.
Пысăклатрăмăр сада.

6. Çиччё çумне пёрре хушрăм —
Пулчё саккăр.
Акă тата тепре хушрăм —
Пулчё тăххăр.
Тăхăр măйăр халё ман.
Миçе măйăр ёнтё сан?

— Манăн пёрре ытларах.
Акă кур, шутла хăвах.
Тăххăр та пёрре — вăл вуннă.
Вуннă măйăр эпё тупнă.

# ТИРЕК

— Юр çăвать, ав, юр çăвать!—
Тантăш савăнса калать.
— Юр? Ăçтан вăл? Халь çулла,—
Пăхрăм эп тула —
Çаврăнать çеç çил-тăман.
Пӳлĕмре епле ларан!
Тухрăм эп... Алла тăсатăп —
Шурă пĕрчĕке тытатăп,
Саптаратăп — шывланмасть,
Сивĕ мар, ӳте шăнтмасть,
Лĕпĕш пек вылять умра.
Савăк туйăм халь — чунра.
Тантăш шав кулать, калать:
— Юр çăвать!
Шур, юр çăвать.

# ХУРĂН

Хурăн эпĕ лартрăм
Пиччепе пĕрле.
Ир те каç шăвартăм,
Шыв çĕкле-çĕкле.
Пĕчĕкчĕ çав хурăн —
Хулпуççи таран.
Ӳсрĕ, пĕвĕ унăн —
Çӳллĕ халь манран.
Ун вулли шап-шурă,
Çулçисем çăра.
Кун пек хурăн урăх
Çук тен, таврара.
Сивĕ-и е шăрăх —
Уншăн ним те мар,
Çутă вăл, пит йăрăс,
Яланах япшар.

# УЛМУҪҪИ

Улмуҫҫи те манӑн пур.
Ҫуркунне кӑҫал
Ларчӗ юр пек вӑл шап-шур,
Кур, улмаллӑ халь.
Улмине вӑл ман валли
Уснӑ аялах:
“Кармашма ҫитмест алли,
Татӑр,— тет,— ҫапла”.

## ПИРЁН ИННА

Пирĕн Инна пит маттур,
пит маттур та пит ĕҫчен.
Савăнмалăх сăнĕ пур,
ыр сăмахĕ те чечен.

Вырăнне те пуҫтарать,
чечексем те шăварать.
Ӳркенмест урай ҫума,
ӳркенмест ҫӳп-ҫап тăкма.

Лавккана та вăл чупать,
апат-ҫимĕҫ туянать.
Юлашки укҫи юлсан
амăшне вăл тыттарать.

Пĕчĕк шăллĕ юнтарсан
ачашлать, лăплантарать.
Пĕчĕкрен ĕҫчен ӳссен
пулĕҫ ун тем чул туссем.

# ТАВРӐНАТЧӖ ПИРӖН УШКӐН...

Пӗтӗм класс хӗрсе кӑларчӗ
Ҫӗрулми тӑван ялта.
Хӑй кӑларчӗ, хӑй пуҫтарчӗ —
Ӗҫ пӗтерчӗ вӑл йӑлтах.

“Юратсах паян ӗҫлерӗм
Эп колхозӑн хирӗнче”,—
Терӗм эп те, хӗпӗртерӗм
Туслӑ халӑх йышӗнче.

Таврӑнать халь пирӗн ушкӑн
Савӑк юрӑ юрласа.
Янӑрать сас уҫҫӑн-уҫҫӑн,
Уй юлать пек тӑнласа.

Чӑн та лайӑх. Лайӑх питӗ
Пулӑшсассӑн колхоза.
Вӑхӑт шӑвӗ, вӑхӑт иртӗ,
Пурпӗр юлмӗ манӑҫа

Ӑмӑртуллӑн, килӗшӳллӗн,
Тӑрӑшуллӑн ӗҫлени.
Ӗшенни-ырни те, шӳтлӗн
Калаҫни, ӗмӗтленни...

Пурте юлёç, тен, яланлăх.
Юлччăр, пулччăр-и асрах!
Ĕнтĕ пур мĕн калаçмалăх,
Урамра та, çул çинче те
Хăть кампа та юлташла...
Тин кăна ял инçетреччĕ.
Ак çитетпĕр те яла.

Пахчасем çара, пушаннă,
Юлнă купăста кăна.
Ўссе çитнĕ вăл, шуралнă,
Пит кĕресшĕн каткана.

Пĕтĕм çĕр, ытти хура та —
Кичемленнĕн туйăнать.
Ав, кĕтмен çĕртен куратăн:
Çĕрулми — мĕн кăларать
Халсăрланнă ватă карчăк
Хуçăлса, сĕм-пĕчченех.
Чарăнатпăр кар! сасартăк,
Кăшт тăрсассăн класĕпех.

Унăн пахчине кĕретпĕр
Хăвăрт эпĕр: “Кинемей,
Хирĕç пулмăн-и эс,— тетпĕр,
Йышăнан-и ĕçлеме?”

Юнашаррӑн, ак, тӑратпӑр
Кӗпӗрех ҫак авӑкра —
Икшер касӑ йышӑнатпӑр
Хӑрнӑ, типнӗ авӑра,
Ярт туртса, тӑпӑлтаратпӑр,
Алӑри кӗреҫепе
Вылятса кӑна пыратпӑр.

Кӑпӑшка хура ҫӗрне
Ҫӑмӑллӑн кӑна чаватпӑр.
Шултӑра ҫӗрулмине
Тимлӗ пӑрахса пыратпӑр.

Шав шавлатпӑр, шӳт тӑватпӑр,
Пикенсе ӗҫле, ӗҫле.
Сисейместпӗр те — тухатпӑр
Кинеми ани вӗҫне.

Хамӑра туятпӑр питӗ
Лайӑх, лайӑх халь. Сӗре
Савӑкланчӗ кинеми те,
Тав тӑвать чунтан пире:

— Ӗҫӗм ку паян пӗтместчӗ
Ман ... пӗччен ... Сурать
чӗрем...
Хытӑ пулӑшрӑр. Кӗтменччӗ.
Спаҫипах, ыр ачасем!

... Çак хитре ёçсем çинчен
Илтрём пёр шкул ачинчен.
Кам вёсем çинчен илтмен.
Пёлчё ман йёркесенчен.

“Куç хӑрать те ал тӑвать”,—
Тенё халӑх авалах.
Кам çакна асра тытать,
Ыр ят илтё яланах.

# САНЮК

Ҫăнăх пек аллатчĕ хĕл
Шур юра, алипеле.
Ҫил-тăман вĕçтернĕрен
Ҫул та çукчĕ темелле.

Тĕттĕм уй, пуш-пушă уй
Хăрататчĕ çав тери.
Хулăн кĕрт хупланипе
Ҫухалатчĕ çул йĕрри.

Пурпĕрех эпир шкула
Ҫул тытаттăмăр хастар.
— Вĕренсен пулатăр çын!—
Тенине ăçтан манар?

Пурччĕ пирĕн ушкăнра
Уçă кăмăллă Санюк.
— Айтăр-ха маяк лартар,
терĕ пĕринче тăрук.

Кĕç вара пасар пекех
Шав çĕкленчĕ таврара.
Лартрăмăр эпир маяк:
Ҫул хытти кирлех ара!

Ырă шухăш хĕпĕртет
Ырă ĕç тума пире.

Ав, пĕри кĕлте йатса
Килнĕ анлă уй-хире.

Тепри çапă купине
Салатать хастарланса.
Çапăри туратсене
Юр çине чикме ансат.

Халь куçа хупсассăн та
Çухатмастпăр шкул çулне.
Савăнса ял-йыш мухтать
Ӳркенмен ачасене.

— Пултаруллă та маттур
ёçлеме пĕлетĕр-çке,—
теççĕ кӳршĕ-аршăсем,—
ăш сăмах та кирлĕ-çке!

2
Эс çырма-çатрасăр çул
Ан шыра тара ӳксе.
Хĕл иртсен те сулнăксем
Такăнтарĕç, тусăмсем.

Пĕр çырма ял патĕнче
Тинкене илетчĕ шав.
Шăрăх кун типсе каять:
Сиксе каçĕ-ши юлхав?

Паттăр çын та каçаймасть
Çырма урлă ялт! сиксе.
Вăйлă çумăр çунă чух
Пăхăн вăрттăн шикленсе.

Хăрушла кĕрлетчĕ вăл
Çумăр шывĕ пулнăран.
Хывăнса каçаттăмăр
Унăн урлă пит аран.

Кĕр енне кайса хĕвел
Çунса пĕтнĕ кăвайтла.
Хĕрĕвне памастчĕ — çав —
Çу иртсен ялан çапла.

3
Пĕлĕтсен хура çуначĕ
Перĕнет пек çĕр питнех,
"Камăн пит сикес килет
Сив шыва?"— ыйтар тӳрех.

Çак çырма тĕлне çитсен
Пĕринче Санюк пире
Пăхрĕ кăмăлсăр куçпа:
— Кам юсать ку çул-йĕре?

— Ма курмасть çакна ял-йыш.
Айтăр-ха çапла тăвар:
Çак хăруш çырма çинчен
Ял-йыша астутарар.

Аптратар килтисене
Ҫак ҫырма инкекӗпе.
Пухчӑр ял-йышра пуху
Туччӑр ҫакӑнта кӗпер.
Ҫакӑн хыҫҫӑн чӑнласах
Шухӑшсӑр ҫын ҫӳремен.
Йышӑнчӗ кӗпер тума
Ман ял-йыш тырпул кӗртсен.

Карлӑклӑ хитре кӗпер
Икӗ чӑнкӑ ҫыранпа
Сыпӑнтарчӗ шкул ҫулне.
Аптрамастпӑр ҫавӑнпа.

Эх, епле Санюк маттур!
Ҫивӗч ӑслӑ вӑл, вӗри.
Ӑс пулсан хисеп те пур:
Ҫакӑ вӑл кун-ҫул йӗрри!

* * *

Тусăм! Эсĕ паянтан мана
Чунăм те!
Эп санпа çеç тупăп чăн-чăнах
ёмĕте.
Шухă çил ачи пек эс ыткăнса
пӳлĕме
кĕтĕн те, кайрăм çухалса:
“Мĕн чĕнес?”
Пĕтĕм хуйхă-суйхă тарчĕ пек:
Тавтапуç!
Çил ачи ма лартăр-ха тӳлек?!
Пуç ан ус!
“Эсĕ çил ачи-çке!— терĕм эп,—
Ан вăтан.
Шыраса эс туп-ха чĕреме
юратсан.
Тупрăн!
Тупрăн эсĕ чĕрене
паянтан.
Хытă ыратать вăл хăш чухне,
Эс çукран.
Юратма пĕлсессĕн чĕререн,
Савăн, кул.
Тĕнчене илем кӳме пĕрре
килтĕм пуль?!

* * *

Юрату хăвачĕ мĕн тери вĕри!
Сан туту, сасартăк, перĕнсен вара
Сисрĕм: юн вĕрерĕ!
Халь манран чĕрри
шыраса кам тупĕ хамăр таврара.

# ПРОЗĂЛЛĂ СĂВĂ

“Сан куçусем цикори пек кăвак,
Сан куçусем цикори пек таса”,— терĕн
Эс мана хĕрӳллĕн ыталаса.
“Цикори куç хупать хĕвел ансан,— эп
Каларăм сана ачашшăн пăшăлтатса.—
Пурнăç илемне туйса юрлатăп
Ирлĕ-каçлă эпĕ, куç хупмасăр.
Ман пăхасчĕ сана яланах савса,
Цикори пек кăн-кăвак куçпа йăл-йăл кулса.
Чупту мана, чупту...
Ыталам та калаçам санпа
Вут кайăк евĕр çунса, çутă çиçĕм пек çиçсе”.

* * *

Çамрăклăх!
Манран эс çухалман иккен!
Çамрăклăх!
Каллех эс таврăнтăн пулас!
Санпала каллех эп юрату тупса
аслă çут тĕнчешĕн
юрлама хавас.

* * *

Пĕрре килетпĕр тĕнчене, пĕрре!
Çĕр хут, пин хут каланă кун çинчен.
Мĕн-ма çакна манатпăр, чĕмере?
Вăрçатпăр, кӳлешетпĕр темĕнччен.
Пĕрне-пĕри савса та юратса,
юратура телейлĕ кун тупса
утасчĕ килĕшӳллĕ сăмахпа
куласчĕ çĕкленӳллĕ сасăпа.

***НА РУССКОМ ЯЗЫКЕ.
ПЕРЕВОД С ЧУВАШСКОГО
А. ДМИТРИЕВА.***

* * *

Коль нет тебя, и день —
сплошная ночь.
Коль нет тебя со мною рядом,
милый,
Мечта моя становится
бескрылой —
И ей уже надеждой не помочь.
Бессоница!
Она неумолима...
На помощь призову ли тишину?
Или тебя, далекий, упрекну?
Не покидай надолго,
мой любимый.
А если не дождусь я хоть
немного
Участия живого от тебя,
Скажу: “Прощай!”—
по-прежнему любя.
В подтексте будет:
“Скатертью дорога!”

* * *

Не часто чутким словом я ловлю
Слова простые:"Я тебя люблю!"
И думы, наподобие камней,
На сердце давят, давят
все сильней.
Я — не вещунья: тайны и обман
Не заменю на боль
сердечных ран.
Не дай, судьба, кидаться
мне в людей
Словами, что и камня тяжелей.
А женский долг на
жизненном пути
Позволь мне до скончания нести.
И с верой в благодатную мечту
Веночек васильковый я сплету
И дочери моей его вручу—
Да будет красота ей по плечу!

* * *

О, молодость!
Явилась ты опять!
О, молодость!
Спешу тебя обнять!
Сложи со мной
Мелодию любви
И миру спой,
И сердце обнови.

* * *

Помню, помню:
В середине лета
На поляне я венок плела.
Ты смотрел с улыбкою на это,
И глаза лучились от тепла.
Годы, версты —
Были и уплыли...
На развилке жизненных дорог
Мы на тропы разные ступили.
Для кого теперь
Плести венок?

* * *

Неземная сила
Так влечет к тебе.
Поцелуй вкусила
И — поклон судьбе!
Все вокруг запело,
Все в груди кипит!
Неземное дело —
Так тебя любить!

* * *

Резкий ветер или дождь,
Или снежные метели —
Если вышел, то дойдешь
До своей заветной цели.
Но намного легче путь
Вопреки земным преградам,
Если чья-то дышит грудь
В трудный час с тобою рядом.

* * *

Живем на свете раз,
и только раз!
Об этом повторяем многократно.
Но неужели говорим невнятно —
Вражда и ревность снова
точат нас.
А до чего же было б хорошо,
Когда бы жили, как семья
большая:
Счастливый день любовью
приближая,
Друг другу помогая всей душой!

# ТУПМАЛЛИ:


Тăван çĕршыв ........................................ 3
Чăваш çĕршывĕ ........................................ 4
Алманчă гимнĕ ........................................ 5
Манса кайман сана, Алманчă ........................................ 6
Эп пырса кĕретĕп Алманча ........................................ 8
Патăрьелĕм ........................................ 9
Эй, чăваш çынни! ........................................ 10
Чăваш халăхне ........................................ 11
"Вĕçеççĕ манăн шухăшсем" ........................................ 12
"Пысăк мар эс, пĕчĕк шыв кăна" ........................................ 13
"Ман Шăнкăртам çыранĕсем тавра" ........................................ 14
"Кун çути килетех" ........................................ 15
Çеçпĕл малашĕ ........................................ 16
"Кайăк хурсем вĕçеççĕ тӳпере" ........................................ 18
Аслă Алманчă, эс ман асăмра ........................................ 19
"Чĕремрен шăранса" ........................................ 20
Тăван ен ........................................ 21
Аннене ........................................ 22
Тулта тăман çавăрттарать пĕр вĕçĕм ........................................ 24
Хĕр-тантăшăма (Алина Хрисанфовна Лукияновăна) 25
Хĕрĕме Иринăна ........................................ 27
Астăвăм çырăвĕ (Т.В. Кудряшовăна,
Çĕнĕ Шăмăршă хĕрне) ........................................ 29
Çаплипех-ха ăс паратăр (Мана вĕрентекен
1-мĕш учительницăна Куцыпина Валентина
Николаевнăна халалласа). ........................................ 31
"Пĕчĕк пӳрт авалхи йывăçсем хыçĕнчен" ........................................ 32
"Тӳпере епле халь тăрăлтаттарса" ........................................ 33
Çуркунне ........................................ 34
Акăш ........................................ 35
Манăн çăлтăр ........................................ 36
Сут тĕнчере мана анчах ........................................ 37
Парсамччĕ сас ........................................ 38
"Çĕмĕртсем шап-шурă" ........................................ 39
Сурхи вăй ........................................ 40
"Ман юрату эс!" ........................................ 41
"Çурхи шывсем кĕрленĕ чух" ........................................ 42
Парадокс ........................................ 43
Ачалăх сасси ........................................ 44
Çуркунне ирпе ........................................ 46
"Тирĕнсе ларчĕ манăн чĕреме" ........................................ 47
"Çил тулаштăр, çумăр çутăр" ........................................ 48
"Эп йăлăнатăп: "Юл, ан кай" ........................................ 49
Эс пур чух... ........................................ 50

Эсӗ ҫук та .................................................. 51
“Таврара сив хӗлӗн каҫӗ” .................................. 52
“Асилетӗн-ши, савни, асилетӗн-ши?”... ..................... 53
“Эп саврӑм чӑваш каччине”... ............................... 54
“Тӑрнасем вӗҫеҫҫӗ”... ........................................ 55
Лантӑш ..................................................... 56
“Эсӗ мӗн, савниҫӗм, шухӑш айне пултӑн?” ............ 57
“Улӑхра пуҫ кӑшӑлӗ эп ҫыхрӑм”... ........................ 58
Мухтавлӑ Пушкин ......................................... 59
“Манран, савни, ан сивӗнсем, ан ютшӑн” ............. 60
“Кӳршӗ-арша инкеклӗ кун”... ................................ 61
Ҫамрӑклӑх илемӗ ........................................... 62
“Хам ӑшӑмра ӗмӗрлӗхех” ...................................... 63
“Пӗччен эп” .................................................. 64
“Каяс килмест те — каймалла”... .......................... 65
“Сут тӗнчере” ... .............................................. 66
“Эсӗ манӑн шухӑша пӗлместӗн”... ......................... 67
“Шарт сиксе вӑранса кайӑн”... ............................ 68
“Кӑн-кӑвак куҫӑмсенчен” ... ................................ 69
“Эп — сан”... ................................................. 70
“Мӗн шавлатӑн эс, сӗм-хура вӑрман?” ................... 71
“Кӗтрӗм эп сана” ........................................... 72
“Курман пек ан ту” ........................................ 73
“Юрататӑп...” ................................................. 75
“Сунасса ҫунтӑн-ҫунтӑн —” ................................. 76
“Нихҫан та кун пек хумханманччӗ”... ................... 77
“Кӗр кунӗсем” ... ............................................ 78
“Паянхи кӗр кунӗ” ... ........................................ 79
“Чӗрери юрату туйӑмне” ... .................................. 80
“Сана ӑнлантӑм пит аван” ... ................................ 81
“Ылтӑн кайӑкӑм” ... ........................................... 82
“Ача чухне эп юрататтӑм” ... ............................... 83
Таврӑнни .................................................... 84
“Ак каллех ҫуркунне”... ...................................... 85
“Эп хырлӑха утса кӗретӗп” ... ............................. 86
“Каллех кунта эп”... .......................................... 87
“Эс мана нимле парне ан пар”... ........................... 88
Хыр ......................................................... 89
“Тунсӑхлӑн эс ман ҫине пӑхатӑн” ........................ 90
“Вӑрмантан та уй-хиртен эп килтӗм” ... .................. 91
“Таврара ав ахӑрать ҫил-тӑвӑл”... ......................... 92
“Атӑл, мӗншӗн хумханатӑн” ... .............................. 93
“Шӑнтать” ... .................................................. 94
“Хӗвел ҫаврӑнӑшӗ тухӑҫалла” ... ............................ 95
“Ҫиллӗ Шупашкарӑн каҫӗ” ... ............................... 96
“Мӗн тӗленнӗ — астумастӑп” ... .............................. 97

Тантӑш, лар-ха юнашар... 98
Тирек 100
Хурӑн 101
Улмуççи 102
Пирӗн Инна 103
Таврӑнатчӗ пирӗн ушкӑн... 104
Санюк 108
"Тусӑм"... 112
"Юрату хӑвачӗ"... 113
Прозӑллӑ сӑвӑ 114
"Самрӑклӑх"... 115
"Пӗрре килетпӗр тӗнчене"... 116
На русском языке.
Перевод с чувашского А. Дмитриева
"Коль нет тебя"... 117
"Не часто чутким словом я ловлю"... 118
"О, молодость!"... 119
"Помню, помню"... 120
"Неземная сила"... 121
"Резкий ветер или дождь"... 122
"Живем на свете раз"... 123

Кӗнекене кун ҫути курма пулӑшнӑшӑн пуҫӑма тайса, ырӑ сунса ҫак юлташсене тав тӑватӑп:

Патӑрьел районӗнчи Ленин ячӗпе хисепленсе тӑракан Алманчӑри агрофирма ертӳҫине — ХИТРОВ Алексей Григорьевича;

"Стромон" пӗрлешӗвӗн суту-илӳ директорне — ГАЯЗОВ Зуфар Саитовича;

Елчӗкри Акционерла обществӑн крахмал завочӗн директорне — ТЕПЛОВ Илья Васильевича;

Патӑрьелӗнчи Акционерла обществӑн сӗт-ҫу завочӗн тӗп директорне — ДУМИЛИН Анатолий Васильевича;

Патӑрьел районӗнчи Чӑваш Сӑкӑтри фермерсен хуҫалӑх кооперативӗн директорне — КУЗНЕЦОВ Юрий Витальевича;

Патӑрьелӗнчи апат-ҫимӗҫ продукцине тирпейлекен "Баярк" предприятин тӗп директорне — ЛЕОНТЬЕВ Валерий Валерьяновича;

Шупашкарти АО "Дорисӑн" 5-мӗш строительство управленийӗн пуҫлӑхне — АНДРЕЕВ Виталий Николаевича.

Канаш районӗнчи Киров ячӗпе хисепленсе тӑракан АО СХПК ертӳҫине — АНДРЕЕВ Николай Степановича.

*Кӗнеке авторӗ*
***Лидия КОВАЛЮК.***

Лидия Алексеевна КОВАЛЮК-АНТИПОВА

БЕЛАЯ ЛЕБЕДЬ

Стихи

На чувашском и русском языках.

Редактор *Н. К. КУШМАНОВ*
Художник *А. П. ЕГОРОВ*
Технический редактор *А. П. ЕГОРОВ*
Компьютерный набор и верстка
*И. Г. МИХАЙЛОВОЙ*

Сдано в набор 11.02.99 г.
Подписано в печать 20.03.99 г.
Бумага офсетная № 1. Формат 60х84/32.
Печать офсетная. Усл. печ. л. 4.
Тираж 1000 экз. Заказ № 583. Цена свободная.

Цивильская типография
Государственного комитета ЧР по печати.
429900, г. Цивильск, ул. Просвещения, 41

10=00